ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙЁНЧЕ ЭТИЛ СПИРЧЁ, АЛКОГОЛЬ ТАТА СПИРТ ПУР ПРОДУКЦИ ТУСА КĂЛАРАССИНЕ ТАТА УНĂН ÇАВРĂНĂШНЕ ПАТШАЛĂХ ЙЁРКЕЛЕСЕ ТĂРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийёнче этил спирчĕ, алкоголь тата спирт пур продукци туса кăларассине тата унăн çаврăнăшне патшалăх йёркелесе тăрасси çинчен" 2005 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 69 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 66 №; 2009, 83 №; 2010, 84 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 5 №; 2015, 10 №; 2016, 12 №; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьяна çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"çурт çумĕнчи территори – нумай хваттерлĕ çурт вырнаçнă тата нумай хваттерлĕ çуртри пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пурлăхĕ шутланакан, чиккисене Куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх реестрĕн даннăйĕсене тĕпе хурса палăртнă çĕр лаптăкĕ, унта çурт подъезчĕсен алăкĕсем патне çуран

пымалли çулсем, ача-пăча вăйă площадкисем, спорт площадкисем, канмалли, кĕпе-йĕм типĕтмелли, автомашинăсем тăратмалли вырăнсем, лартнă йывăç-курăк тата пурте усă куракан ытти объектсем вырнаçнă (енчен те нумай хваттерлĕ çурт (нумай хваттерлĕ çуртсем) вырнаçнă çĕр лаптăкне кирлĕ пек йĕркелесе çитермен пулсан, çурт çумĕнчи территори тенине пĕр е темиçе нумай хваттерлĕ çурт çумĕнчи территори пек ăнланмалла, вăл нумай хваттерлĕ çуртри (нумай хваттерлĕ çуртсенчи) пӳлĕмсен хуçисене асăннă çуртсене, çавăн пекех çавнашкал нумай хваттерлĕ çуртри (нумай хваттерлĕ çуртсенчи) пӳлĕмсен хуçисен пĕрлехи пурлăхĕн шутне кĕрекен объектсене ĕçлеттерме кирлĕ.";

2) 8^1 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"8^1 статья. **Нумай хваттерлĕ çуртсенче, нумай хваттерлĕ çуртра вырнаçнă, çурт çумне тĕксе тунă, çуртра вырнаçнă-çурт çумне тĕксе тунă пӳлĕмсенче тата (е) вĕсен çумĕнчи территорисенче вырнаçнă обществăлла апатлану объекчĕсенче обществăлла апатлану енĕпе пулăшу ĕçĕсем панă чухне алкоголь продукцине ваккăн сутас ĕçри хушма чарусем**

1. Нумай хваттерлĕ çуртсенче, нумай хваттерлĕ çуртра вырнаçнă, çурт çумне тĕксе тунă, çуртра вырнаçнă-çурт çумне тĕксе тунă пӳлĕмсенче тата (е) вĕсен çумĕнчи территорисенче вырнаçнă обществăлла апатлану объекчĕсенче (ресторансемсĕр пуçне) обществăлла апатлану енĕпе пулăшу ĕçĕсем панă чухне вырăнти вăхăтпа 23 сехетрен пуçласа 10 сехетчен алкоголь продукцине ваккăн сутма юрамасть.

2. Тавар илекенсем (потребительсем) кĕрсе çӳрекен вырăн нумай хваттерлĕ çурт подъезчĕ (подъезчĕсем) енче, эвакуаци вырăнĕсем шутланакан подъездсемсĕр пуçне, тата (е) çурт çумĕнчи территори енче вырнаçнă обществăлла апатлану объекчĕсенче алкоголь продукцине ваккăн сутма юрамасть.

3. Нумай хваттерлĕ çуртсенче, нумай хваттерлĕ çуртра вырнаçнă, çурт çумне тĕксе тунă, çуртра вырнаçнă-çурт çумне тĕксе тунă пӳлĕмсенче тата (е) вĕсен çумĕнчи территорисенче вырнаçнă обществăлла апатлану объекчĕсенче, килен-каяна йышăнмалли залăн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ, килен-каяна сезонра йышăнакан зал (зона) лаптăкне шута илмесĕр, 50 тăваткал

метртан кая мар шутланакан обществăлла апатланăвăн асăннă объекчĕсенче кăна алкоголь продукцине ваккăн сутма юрать.

4. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсен çумĕнчи территорисен чиккисене муниципаллă округсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем халăхпа сӳтсе явнин кăтартăвĕсене шута илсе Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă правилăсемпе килĕшӳллĕн палăртаççĕ.";

3) çакăн пек çырса 8^2 статья хушса хурас:

"8^2 статья. **Обществăлла апатлану объекчĕсенче, çав шутра нумай хваттерлĕ çуртсенче, нумай хваттерлĕ çуртра вырнаçнă, çурт çумне тĕксе тунă, çуртра вырнаçнă-çурт çумне тĕксе тунă пӳлĕмсенче тата (е) вĕсен çумĕнчи территорисенче вырнаçнă объектсенче, обществăлла апатлану енĕпе пулăшу ĕçĕсем панă чухне сăрана, хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексене, сидра, пуарене, сим пыла ваккăн сутас енĕпе пурнăçламалли требовани**

Обществăлла апатлану енĕпе пулăшу ĕçĕсем панă чухне патшалăх стандарчĕсемпе палăртнă чи пĕчĕк требованисене тивĕçтерекен ресторан, бар, кафе, буфет евĕр обществăлла апатлану объекчĕсенче кăна, çав шутра нумай хваттерлĕ çуртсенче, нумай хваттерлĕ çуртра вырнаçнă, çурт çумне тĕксе тунă, çуртра вырнаçнă-çурт çумне тĕксе тунă пӳлĕмсенче тата (е) вĕсен çумĕнчи территорисенче вырнаçнă объектсенче, сăра, хăмла ярса хатĕрленĕ шĕвексем, сидр, пуаре, сим пыл сутма юрать.".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет тата 2031 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕччен (нарăс уйăхĕн 28-мĕшне кĕртсе) вăйра тăрать.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ
55 №